Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

34-35 (7459-7460) №№ ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи апрелĕн (ака) 28-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

ХИСЕПЛĔ МУРКАШ РАЙОН ÇЫННИСЕМ!

Сире Чăваш чĕлхи кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Çак куна эпир чăвашсене çутта кăларакан И.Я.Яковлев çуралнă кун паллă туни те ахальтен мар. Чăваш çырулăхне йĕркеленипе пĕрлех чăваш чĕлхи ытти чĕлхесемпе тан пултăр тесе чунне парса ĕçленĕ вăл. Иван Яковлевич халалĕсем паян та пире тăван чĕлхене, тăван халăха, тăван çĕршывăмăра юратма, упрама хистеççĕ. Тăванлăх туртăмĕнчен хакли çукки çинчен асилтерсе тăраççĕ. Паян тăван чĕлхемĕр çепĕççĕн, ирĕклĕн янăрать. Вăл çĕршывăмăрта вырăс чĕлхипе танах патшалăх чĕлхи пулса тăчĕ.

Чăваш чĕлхи – атте-анне парнеленĕ пуянлăх. Пĕр çакă кăна ăна юратмаллине пĕлтерет. Тăван чĕлхере – пирĕн ачалăх, пирĕн пурнăç, пирĕн малашлăх. Тăван чĕлхене, хамăра хисеплетпĕр пулсан, пире ытти халăхсем те хисеплеççĕ. Çавăнпа та малашне те ытарайми çепĕç, янăравлă чăваш чĕлхине, хамăр халăхăмăрăн ĕмĕртен пыракан историне, культурине, йăли-йĕркине сыхласа хăварас, аталантарас ĕçре çитĕнӳсем тума ырлăх-сывлăх сунатăп. Çакă вăл – пирĕн кашнин тивĕçĕ.

Пурне те çирĕп сывлăх, ăнăçу, тулли телей сунатăп.

Район пуçлăхĕ Ю. ИВАНОВ.

ПУШАР ХУРАЛĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНĔСЕМ!

Сире пурне те професси уявĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Пирĕнтен кашниех хамăрăн пурнăçа лайăхлатас тесе тăрăшать. Хамăр тăрăшни, çут çанталăк пани вуткăварта ан пĕттĕр тесе вара эсир хăвăртан килнине йăлтах тăватăр. Çулăмпа кĕрешсе çынсен пурнăçне, пурлăха çалатăр. Районăн социаллă-экономика аталанăвĕнче сирĕн ĕç пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать. Тавах сире çакăншăн. Эсир малашне те пушар хăрушсăрлăхĕшĕн ырми-канми тăрăшасса шанса тăратăп.

Çирĕп сывлăх, çăмăл мар, анчах пархатарлă ĕçĕрте ăнăçу, пурнăçра телей сунатăп.

Район пуçлăхĕ Ю. А. ИВАНОВ.

ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!

Ыран – Чăваш Республикин Патшалăх символĕсен кунĕ. Патшалăх символĕсем чăваш патшалăх тытăмĕн аталанăвĕнче пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вĕсем кашни çыннăн Тăван çĕршыв, тăван кĕтес, патриотизм, истори, гражданла тивĕç туйăмĕпе тачă çыхăннă. Çавăн пекех республикăн историне, тăван Чăваш Енте пурăнакансен пĕрлĕхĕпе шанчăкне, ĕмĕтне кăтартса параççĕ. Чăваш Республикин патшалăх Ялавне, Чăваш Республикин патшалăх Гербне, Чăваш Республикин патшалăх Гимне çитĕнекен ăру хисеплетĕр, ăша хывса ӳстĕр тесе тăрăшмалла пирĕн. Кăçал Ача çулталăкĕ пулнă май уйрăмах асра тытмалла çакна. Тăван тавралăхпа, тăван чăваш халăхĕпе мăнаçланас туйăм мĕн пĕчĕкрен аталантăр кашни çынра. Кирек епле патшалăх та хăйсен гражданĕсен пĕрлĕхĕпе хăватлă. Çĕршыв хăйне хисеплекен, юратакан гражданселпе вăйлă, пуян.

Пурне те çак паллă кунпа саламлатăп, тăван енĕмĕр, республикăмăр, çĕршывăмăр аталанăвĕшĕн çине тăрса вăй хума ырлăх-сывлăх, телей, тăнăç пурнăç сунатăп.

Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.

МУРКАШ РАЙОНĔН ХИСЕПЛĔ ÇЫННИСЕМ!

Сире пурне те çывхарса килекен Çуркуннепе ĕç уявĕ ячĕпе пĕтĕм чун-чĕререн саламлатăп. Çуркунне чĕрĕлсе вăй илнĕ май эпир пурте шанчăкпа çунатланатпăр, хамăрăн пурнăç татах та лайăхланасса ĕненетпĕр. Ку вара йăлтах хамăртан, эпир пĕр-пĕрне ăнланса, пĕр шухăшлăн ĕçлениччен килет. Пирĕн йывăрлăхсенчен хăрамасăр умри тĕллевсене пурнăçлассишĕн çунса тăмалла. Вара кирек епле отрасльте те çитĕнӳсем пулĕç. Районăмăр татах та чечекленĕ, пуянланĕ. Çĕршывăмăр та татах вăйлăрах, çынсен пурнăçĕ тулăхрах пулĕ.

Малашне те ĕмĕт-тĕллевĕрсене пурнăçа кĕртме тулли кăмăл, вăй-хал, çирĕп сывлăх, ăнăçу сунатăп. Çемйĕрсенче килĕшӳ хуçалантăр. Ăнăçу пурнăçăр çулне уçсах пытăр.

Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.

ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!

Майăн 1-мĕшĕ – Çуркуннепе ĕç уявĕ ячĕпе сире пĕтĕм чĕререн саламлатăп!

Çак уяв пултарулла ĕç савăнăçĕпе, çут çанталăк çĕнелсе чĕрĕлнипе тачă çыхăннă.

Ĕç çынни кирек хăçан та хитре, чун хавалĕпе тулли пулнă. Ахальтен мар ĕнтĕ художниксемпе поэтсем хăйсен ĕçĕсенче çак сăнар патне тăтăшах таврăнаççĕ. Чăваш халăхĕн çакăн пек каларăш пур: ĕç вăл – пурнăç илемĕ. Хăйĕн ĕçне чунтан юратакан çын кăна чăннипех те телейлĕ пулма пултарать. Кашниех пирĕнтен хăйĕн ĕç выраннĕнче вăй хурать, çак ĕçе хăйĕн чунĕн пĕр пайне, энергине, пĕлĕвне тата ăсталăхне хывать. Çапла вара республикăн тата çĕршывăн хăвачĕпе çынсен ырлăх-пурлăхне ӳстерме хăйĕнчен мĕн килнине тăвать.

Чăваш Енри мĕн пур ĕç çыннисене ăнăçу, професси тĕлĕшпе аталану, çирĕп сывлăх, телей тата çемьере килĕшӳпе çураçу сунатăп.

Сире хисеплесе Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕ, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» («Единая Россия») фракци членĕ Павел СЕМЕНОВ.

Çамрăклăх

Ĕçченлĕхĕпе палăрать

Лариса Валерьевна Храмова Муркаш райповĕн Нискассинчи закусочнайра иккĕмĕш çул çеç ĕçлет пулин те, хăйне тăрăшулăхпа кăтартать: суту-илӳ пӳлĕмĕнче тирпейлĕ, сентресем çине пăхма кăмăллă, хăй те килекен çынсемпе тараватлă. Мĕн кирлĕ-ха тата тавар туянакана? Çакăнтан тымарланать те ĕнтĕ райпо ӳсĕмĕ.

А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

Çур аки – 2007

Тăри сасси хире чĕнет

Уй-хирсем пулса çитнĕ май хресченĕн килте ларма вăхăт пачах та çук. Унăн паянхи тĕп тĕллевĕ – пысăк тухăç никĕсне агротехника ыйтнă вăхăтра хывса хăварасси. Çак ĕçе пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем пуçăнчĕç те ĕнтĕ. Апрелĕн 26-мĕшĕ тĕлне хуçалăхсем пулас тухăçшăн кĕрешсе 500 тонна ытла çуртри вăрлăхне имçамланă. Ку ĕçе Ильич яч. хис. хуçалăх пĕтĕмпех (209 тонна) пурнăçланă. Районĕпе 2700 тоннăна яхăн çĕр улми вăрлăхне (58 процент) яровизациленĕ. Кĕрхи культурăсене 5 хуçалăхра 258 гектар апатлантарнă. Ку ĕçе Ильич яч. хис., "Свобода", "Восток" хуçалăхсенче лайăх йĕркеленĕ. Районĕпе нумай çул ӳсекен курăксене 715 гектар (6 процент) çинче апатлантарнă, 2017 гектар çинче (16 процент) нӳрĕк тытса хăварнă. 100 гектар акма çĕр хатĕрленĕ.

РФ Президенчĕн Çырăвĕ

Раççей строительствин стратегине палăртнă

Апрелĕн 26-мĕшĕнче РФ Президенчĕ Владимир Путин Кремлĕн Мрамор залĕнче Раççей Федераци Пухăвне янă Çырупа паллаштарнă. Каласа хăвармалла, траур кунне пула Çырăва вулассине пĕр талăк каярах куçарнă. Çавна май патшалăх пуçлăхĕ чи малтанах пухăннисене Раççей пĕрремĕш Президентне асăнса пĕр минут шăп тăма ыйтнă.

Федераци Пухăвне янă Çыру Раççейĕн хăватлă держава тĕлĕшĕнчи строительствин стратегийĕ пулса тăрать. Çак пĕлтерĕшлĕ документра Раççей хăватне ӳстерессипе нумай вăхăтлăх программăна тата куллен татса памалли задачăсене уçăмлăн палăртнă.

Камăн сăвăм пысăкрах?

Районти хуçалăхсенче кăçалхи апрелĕн 26-мĕшĕнче кашни ĕнерен сĕт вăтамран мĕн чухлĕ суса илнине кăтартни

Цифрăсен колонкисенче: 1. Кашни ĕне пуçне сĕт сунă. 2. Иртнĕ çулхи çав вăхăтра сунă (килогрампа).

Е. Андреев яч. хис.	5,5	9,6
ООО «Волга»	9,9	8,5
«Восток»	15,7	11,1
«Герой»	17,7	11,8
К. Иванов яч. хис.	8,5	3,6
Ильич яч. хис.	10,5	11,2
Ленин яч. хис.	5,9	10,8
ООО АФ «Лидер»	7,8	13,0
ООО АФ "Дружба"	3,3	13,5
«Оринино»	13,0	9,1
«Передовик»	6,6	7,5
«Свобода»	12,9	14,8
«Сеятель»	3,5	4,6
Суворов яч. хис.	15,3	11,9
ООО АФ "Рассвет"	7,0	10,4
«Ударник»	14,6	11,8
Чапаев яч. хис.	10,6	10,7
«Чемеево»	9,0	8,9
Чкалов яч. хис.	12,7	9,8
Хресчен (фермер) хуçалăхĕсем	4,5	–
Районĕпе	**10,8**	**10,5**

Çырăнтару – 2007

Райхаçат редакцийĕ çырăнтару хакне чакарчĕ

Районти "Çĕнтерӳ ялавĕ" хаçата иккĕмĕш çур çулта илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.

Апрельтен ытти мĕн пур изданисем çырăнтару хакне ӳстереççĕ пулсан, райхаçат редакцийĕ ăна чакарчĕ.

Район хаçатне 6 уйăха çырăнса илмелли çĕнĕ хак – 147 тенкĕ те 42 пус.

Республикăра

2008 çулта Иван Яковлев 160 çул тултарнине халалланă мероприятисем иртĕç

Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров чăвашсен паллă çутта кăлараканĕ тата гуманисчĕ Иван Яковлев 160 çул тултарнине халалласа 2008 çулта мероприятисем ирттересси пирки хушу кăларнă.

Çак документпа пĕрлех республика ертӳçи Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне И.Я. Яковлев 160 çул тултарнине хатĕрленсе ирттерме йĕркелӳ комитечĕ тума тата мероприятисен планне çирĕплетме хушнă. Палăртнă тăрăх асăннă мероприятисене республикăри вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем те активлă хутшăнмалла.

ЧР ПА пресс-служби

Апрелĕн 29-мĕшĕ – ЧР Патшалăх символĕсен кунĕ

Патриот туйăмне çуратаççĕ

Хальхи тата пулас ăру çыннисене Чăваш Республикин патшалăх символĕсене хисеплеме хăнăхтарас, вĕсем тĕлĕшпе пропаганда ĕçне анлăлатас тĕллевпе республика Президенчĕн Н.В. Федоровăн указĕпе апрелĕн 29-мĕшне Чăваш Республикин Патшалăх символĕсен кунĕ тесе уявлама йышăннă. Патшалăх Гимнĕ, Гербĕ тата Ялавĕ республикăра пурăнакансен историне пĕтĕмлетеççĕ, пĕрлĕхне çирĕплетеççĕ, вĕсем çутă малашлăха ăнтăлнине кăтартса параççĕ.

Çак куна халалласа районти библиотекăсенче тĕрлĕрен мероприятисем сахал мар пулса иртеççĕ. Кусем вĕсем патшалăх символикине халалланă уроксем, «Манăн тавралăх символики» викторинăсем, «Патшалăх символĕсем: истори тата хальхи вăхăт», «Шупашкар – Атăл тăрăхĕн мерченĕ» электронлă изданисене пăхасси, «Истори фонĕ çинчи виçĕ символ» калаçусем, «Виçĕ символ уявĕ» литература ăсталăхĕн конкурсĕсем т. ыт. те. Кунпа пĕрлех патшалăх символĕсене халалланă информаци стенчĕсем йĕркелеççĕ, буклетсем тăваççĕ.

Т. КОРОЛЬКОВА, районти тĕп библиотека методисчĕ.

Пĕтĕм Раççей конкурсĕ

«Ударник» хуçалăх лайăххисен шутĕнче

2007 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнче «Территориальная генерирующая компания № 5» тата «Чувашская энергосбытовая компания» уçă акционер обществисемпе «Коммунальные технологии» чикĕллĕ яваплăхлă общество Пĕтĕм Раççейри «Золотая опора» виççĕмĕш конкурс итогĕсене пĕтĕмлетнĕ, Чăваш Республикинче ăшă тата электричество энергийĕпе уçă курассипе чи ăнăçлă ĕçлесе пыракансене палăртнă.

Ку енĕпе ял хуçалăх предприятийĕсем хушшинче чи пĕрремĕш вырăна тухайман пулин те, «Ударник» хуçалăх тивĕçлипех диплом çĕнсе илме пултарнă.

Юбилей

Саламлатпăр

Юнкă ялĕнче пурăнакан **Тамара Егоровна ЯРГУНЬКИНАН** апрелĕн 26-мĕшĕнче çуралнă кунĕ. 27 çул хушши Юнкăри "Рябинушка" ача садĕнче воспитательте вăй хунă тата паян та çакăнта тăрăшакан юратнă мăшăра, аннене, асаннене, ыр кăмăллă тăвана çак асамлă уявпа чĕререн тухакан ăша сăмахсемпе саламлатпăр. Санăн пурнăçна малалла та тăванусемпе çывăх çыннăрсен юратăвĕ, ăшши, пулăшăвĕ çул уçса пырасса шанатпăр.

... Аннеçĕм, анне!..
Пурнăçра нумай чăтса ирттертĕн,
Хуйхи-суйхи те пулман мар пĕрре,
Анчах пире юратрăн та ӳстертĕн,
Çывăхран та çывăх, юратнă анне.
Тав сана пуриншĕн те: ăшшушăн,
Ĕçленишĕн, ыйхă вĕçтернишĕн,
Эпир çавна манман, пĕлетпĕр парăма,
Çывăх çыннăмăр эсĕ, юратнă анне.

Саламлатăп тав туса мăшăрĕ, ачисем, мăнукĕ, тăванĕсем.

Юратнă аннене, кукамая, асаннене – Чуманкасси ялĕнче пурăнакан **Христиния Васильевна АНТОНОВАНА** 70 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр, çирĕп сывлăх тата канлĕ ватлăх сунатпăр.

Саламлаканĕсем: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, правнукĕсем, хăтисемпе тăхлачисем тата çывăх тăванĕсем.